# Ленинградри Мрамор двореца кам тунă?

XVIII ĕмĕрте Российăра архитектура ăсталăхĕ çав тери хăвăрт аталанса пырса пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă. Ун чухне туса лартнă керменсем хăйсен илемĕпе паян кун та пире çеç мар, урăх çĕршывсенчен килсе куракансене те тĕлĕнтересçĕ. Çав тапхăрта Петербург хулинче уйрăмах пысăк строительство пынă.

Мĕнле ăста çынсем туса лартнă-ха çав мăнаçлă дворецсене, чаплă та капăр çуртсене? Çак ыйту çине ответлесе, ĕлĕкренпех Растрелли, Фельтен, Ринальди, Кварнеги, Деламот ячĕсене асăннă. Вĕсем хыççăн тин Баженова, Казакова, Квасова тата ытти вырăс архитекторĕсене—темиçе çынна кăна хушса хунă.

Ĕлĕкхи саманара пурăннă, халиччен тивĕçлипе хак паман талантлă архитекторсенчен пĕри чăваш халăхĕн ывăлĕ Петр Егорович Егоров пулнă. Чылай вăхăт хушши унăн ячĕ историре паллă пулманпа пĕрех. Юлашки çулсенче тин пирĕн умма унăн чăн-чăн сăнарĕ, унăн чаплă ĕçĕсем тухса тăчĕç. Анчах халĕ те унăн пурнăçĕпе ĕçĕсене çителĕклĕ тĕпчесе пĕлмен-ха. Çак енĕпе Ленинградри инженер-архитектор Ф. Д. Кузнецов питĕ тăрăшса ĕçлет. Мускаври, Ленинградри архивсенчи авалхи документсене икĕ çул хушши тĕплĕн тĕпченĕ хыççăн вăл çак ыйтăва тĕрĕс çутатса пама чылай пулăшакан пархатарлă ĕç турĕ.

Çак кунсенче республикăри наукăпа тĕпчев институчĕн истори секторĕн ларăвĕнче Ф. Д. Кузнецов юлташ хăйĕн юлашки вăхăтри ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Вăл документсемпе çирĕплетсе каласа панинчен акă мĕн уççăн палăрать: П. Е. Егоров XVIII ĕмĕрте Петербург хулине тăвас ĕçре ун чухнехи чи паллă архитекторсемпе—Растреллипе, Баженовпа, Старовпа, Ринальдипе, Фельтенпа, Квасовпа тата ыттисемпе пĕрле алла-аллăн ĕçленĕ, вăл вырăс архитектуринчи классика стильне пуçласа яракансенчен пĕри пулнă, Петергофăн (хальхи Петродворец) генеральнăй планне туса хатĕрленĕ. Ленинградри çуллахи сад тавра 1784 çулта тытса çавăрнă, чугунран чĕнтĕрлесе тунă çав тери илемлĕ хӳмене шăпах П. Е. Егоров проекчĕ тăрăх туни пирки нимĕн иккĕленмелли те çук.

Ф. Д. Кузнецов çавăн пекех Ленинградри Мрамор двореца кам тунине те тĕрĕс çутатса паракан фактсем тупса палăртнă. Чылай вăхăт хушши çав чаплă двореца (унта халĕ В. И. Ленинăн Центральнăй музейĕн Ленинградри уйрăмĕ вырнаçнă) Итали архитекторĕ Кварнеги проекчĕпе тунă, тесе шутланă пулнă. Юлашки вăхăтра проект авторĕ тепĕр итальянец—Ринальди пулнă, тесе шутлаççĕ. Тĕпчевçĕ ку шухăш та тĕрĕс маррине тӳррĕнех кăтартса паракан питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ документ тупнă. Çав документ çинчен халиччен пĕр ученăй та пĕлмен-мĕн.

Мрамор двореца 17 çул хушши тунă. Ана тунă çĕрте П. Егоров ĕçлени ытти документсенчен те паллă, анчах дворец проекчĕн авторĕ вăл пулнине çирĕплетсе калама халиччен фактсем пулман. Халĕ çавăн пек документ пур ĕнтĕ. Вăл—строительство ĕçĕсен начальникĕ Буксгевден полковник Мрамор двореца туса пĕтерни хыççăн Кĕтерне патшана çырса панă рапорт. Буксгевден çак двореца П. Е. Егоров ертсе пынипе, унăн проекчĕпе туни çинчен тӳррĕнех пĕлтерет, ку чаплă ĕçшĕн талантлă архитектора укçапа парнелеме тата пысăкрах чин пама сĕнет. Çак документа урăх фактсемпе çирĕплетме май килсен, Мрамор дворецă П. Е. Егоров тунине шанчăклах кăтартса пама пулĕ.

Чăвашран тухнă чаплă архитектор ытти нумай çуртсем лартни çинчен те Ф. Д. Кузнецов чылай каласа пачĕ. Сăмахран, П. Е. Егоров Зимний дворец, Петергоф, Смольнăй монастырь, Çуллахи сад тунă çĕрте нумай ĕçленĕ.

Юлашкинчен Ф. Д. Кузнецов чаплă архитекторăн портречĕ çинчен интереслĕ хыпар пĕлтерчĕ. Халиччен П. Е. Егоров портретне ниçта та тупайман. Ана шыраса, Ф. Д. Кузнецов XVIII ĕмĕрте пурăннă темиçе пин çынăн портречĕсене тишкерсе тухнă. Юлашкинчен Ленинградри Вырăс музейĕнче вăл пĕр портрет тупнă. Унта пĕр хĕрĕх çулалла çитнĕ архитектора ӳкернĕ, вăл аллинче чертеж тытса ларать. Аялта художник ятне те, кам сăнĕ иккенне те çырса хуман. Мĕншĕн ăна Егоров портречĕ тесе шутлама пулать-ха? Ун пек шутлама çакăн пек сăлтавсем пур: портрет çинчи çын XVIII ĕмĕрти 70—80-мĕш çулсенче тăхăнса çӳренĕ тумпа ларать, вăл вăхăтра П. Е. Егоров шăпах хĕрĕх çулсенче пулнă; портрет çинчи çын вырăс архитекторĕ пулни уççăнах паллă—унăн аллинчи чертежа аршăн тата чалăш виçипе тунă; ун чухнехи паллăрах вырăс архитекторĕсен кашниннех портречĕсем сыхланса юлнă, пĕри те вĕсем асăннă портретпа пĕр пек мар. Анчах чи пысăк сăлтав акă мĕнре: портрет çинчи архитектор тытса ларакан чертеж П. Е. Егоровăн пĕр проекчĕпе пĕр евĕрлĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ку портрет çинче шăпах унăн сăнне ӳкернĕ, тесе шутлама май пур.

И. МИХАЙЛОВ.